„Канаш“ хаçат çумĕнҫетухаҫ.

# КАПКĂН

15-мĕш №

Авкустшăн 1926 ç. 2-мĕш çул тухаҫ.

## МУР КИЛСЕ КĔНĔ ПЕК.



— Мĕвле пирĕн арçынсем пайан пурте ҫирлесе кайнă.

— Ара, пайан йалсовет çулсем йусама хăвалана çынсене те, çавăнпа ҫирленĕ.

# Йумăç пĕтерҫĕ.

Çапла майлă çын пурăнвă, Пракух йатлăскер арăмĕпе, пĕр лашапа, пĕр кĕсрепе, тата ула ĕнипе, 16 çулхи хĕрĕпе. Пурăнвă та пурлăх пухнă. Пуйан пулнă Пракух. Пуйавăн авганĕ те çăмарта тăваҫ теççĕ те, анҫах унăн çăмарта тума пултаракан автан пулман. Автанран мар вăл—аппаратрак пуйнă. Мĕнле аппарат вăл пуйтаракан-скер, тейĕр. Ратио-апарат мар, сăн ӳкермелли те мар—сăнтан ӳкерекенни сăмакун аппараҫĕ. Ун пек аппаратсем ахаҫ çынсенех пулма пултараççĕ, анҫах ку аппарат, тӳррипе каласан, пур аппаратсенҫен те лайăххраххи, шăхăраканни пулнă. Вăл аппаратпа ерех туса выçлăх çулсенҫе ҫăпти-ҫăптипе ерех пухаҫĕ. Мĕн тăваҫ вăл çăмарта тăвакан автанпа? Автана çăмарта тутарнипе пуйаймăн, шăхăракан аппарат пулсан, епĕр те Пракухран кайах пулмăттăмăрҫĕ. Йалти ӳтевĕ карҫăксем каланă тăрăх, вăл аппарата милитсисем те илсе кайаймаççĕ, тет. Тухатнă йапалана кам тытма пултарĕ ĕнтĕ.

Пурăннă-пурăннă çак Пракух. Авканни вунçиҫ çул тултарса вунсаккăрĕшне кайнă. Пурнăçĕ шыв пек йухса пыраҫ. Çапах та вăл хăйне телейлĕ çын шутне хуман. Тĕлĕнмелле вăл етем тенинҫен! Телейлĕ пулсан та, хăйне телейсĕр çын шутне хураҫ.

— Тем каласан та, еп телейлех мар пулмалла. Темĕншĕн ăш варкаҫ. Мĕнтен телейлĕ марши еп? Пĕлесҫĕ. Шăхăракан аппарат ҫылай укçа шăхăртса килет. Иалта йатлă çын пултăм. Иут çĕрте те мана пĕлеççĕ. Ҫавашсем анҫах мар. Сĕнтĕр-вăрринҫи пиавҫушкăсем те курсанах мана «Прокух Йăванҫĕ» тесе, çĕгĕк çĕлĕкĕсене илеççĕ. Хам ҫаваш пулсан та, сăмавар туйантăм Арăм аван,—çын арăмсем пек, çăва тĕпне кайманскер, тесе йатламасҫ—старик тесех ҫĕнет. Хĕртен телейлĕ—16 çула çиҫрĕ.

Пракух сасартăк кĕпе пек шуралса карĕ. Ик аллипе шарт çапрĕ.

— Ак ăçта манăн телей çукки, тесе сухăрсах йаҫĕ. Ывăл çукиç манăн. Çавăнпа епĕ телейсĕр! Хаҫ пулсан ҫасах çитĕнеймĕ. Ма мана арăм халиҫен ывăл туса памасхă? Пĕлес пулаҫ кăна. Пĕлмесен май килмест.

Ҫупаҫ йумăçа, йалти Таңук карҫăкĕ патне. Хашкаса пырса çитрĕ те:

— Мĕнле, тет, ман арăм, халиҫен ывăл аҫа туса памарĕ?

Камра айăпĕ—арăмра и, хамра-и?

— Арăмунта, тет йумăç.

— «Ейпох» те!..

— Уйпухусене ан асăн кунта. Иумăçра турă йатне асăнма йурамасҫ. Шуйтан вăйĕпе епĕр ĕçлетпĕр.

— Шуйтан вăйĕпе пулсан йурĕ теха.. «Шуйтан вăйĕ» ман арăм çинҫен мĕн калаҫ. Каласа парха, тархасшăн.

Иумăçĕ шăлĕсене йĕрсе йанă.

— Сан арăму йĕкĕтсемпе пурăнаҫ, тет.

— Иĕрĕхсемпе?! Усал йерне апла ăна! Мĕн тăваскха.

— Иĕрĕхсемпе мар, йĕкĕтсемпе! Еç çук ҫухне ун патĕнҫен йĕкĕт таталмасҫ. Ес пасара кайан, арăму çумне йĕкĕт пырса лараҫ. Пырса ларнипе сахалха, урăххи те пулаҫ унта. Çавăнпа та арăму ывăл тăвaймасҫ. Çылăха кĕрсен нихăçан та ывăл пулмасҫ. Ара, апла йураҫи пурăнма! Арлă-арăмăн пĕр çăвара сурас пулаҫ.

— Пĕр çăвара?! тет Пракух тăнланаймасăр çăварне карса.—Хеҫ!

— Пĕр çăвара çав. Ытла кутăн сан арăму. Пĕрре, хурсем пирки, ҫахăсем пек, тытăçсах вăрçрăмăр. Ара, ҫĕлхине ҫараймасҫ. Шăрҫăк мари!

— Шăрҫăках мар та, тет хайхи Пракух йумăç карҫăкне хирĕç.

Иумăç çалленҫĕ.

— А-а, ес йумăçа ĕненместĕни! Апла пулсан ан шăршлантарса тăр кунта, терĕ туйипе шаккаса.

Пракух хăрарĕ. Карҫăк кăмăлне:

— Шăрҫăкланасси пурах çав. Ĕнер мана ухмах, терĕ. Аçган ет ухмах пулăп. Ман 16 çулхи хĕр пур. Аҫă паҫаллă çын ухмах пулма пултараймасҫ, темелле пулҫĕ.

— Хĕрĕ те сан аскăнҫăк Амĕш майлах. Ак, аҫа туса парсан...

Çакна илтсен, Пракух çĕлĕкне илҫĕ те, вĕçтере паҫĕ килелле, ҫĕлĕмĕ те унтах ӳксе пулҫĕ.

# МАЙЛАЙМАРĂМ КĂÇАЛ.

Епĕ Истерекри вăрăм Михалккин Хĕлĕпĕ пулатăп, шăлăмсем! Хура та вăрăмскер, ăсăм татах хам тăршĕ тепре пурĕ. Авăах ийуç уйăхĕнче Ĕăваш Сурăм вуласĕн Кив-Маĕакри Стакканăв Михалăнне ĕне сутăн илсе кил сессĕн тепĕр кунне, пĕрене купнинчен тирĕнсе кайса хăрах урана мăкăлтарăм та, халĕ хурлăх курса мĕнле йусанмалли çинчен шухăшласа, тата ĕнесем илсе сутталамалли çул пĕтрĕ тесе, пўртрех хуйхăрса ларатăп. Ытлах ан кучанăрха есĕр те, шăлăмсем! Епĕ пĕр ĕнеренех марха, Ĕăваш Сур вуласĕнчи старши милитси йулташ Павлăвран тăрăнса утăнса карăм, çавăнпа та мĕнле ăс тупас тесе хуйхăрса ларатăп.

Пĕлтĕр хамăр йалсен пĕр хĕрарăмăн хăвачши червонтсипе Нурăс пасарне кайса пилĕк тенкĕшĕн хам илмелле вырнаçтарса хвачши червонтсă тупсачĕ те, кăна Нурăса каймасăрах майлăпха тесе, çўлте калана Михал шăлăма ĕнешĕн чанахах та тыттарса хăвартăм. Червонтсăсем курманскер тепĕр кунне ман Михала шăлăм Маĕак йал канашĕн çыруçине Корнилова вулĕçтăвком каснаçейĕнче улăштарса (вакласа) килме панă; лешĕ ухмахскер ман политсинче чухне шалу илнĕ кĕ неки мĕнĕпех каснаçейе тыттарнă (епĕ лугăрканасран червонтсине çав кĕнеке варне чиксе панăчĕ).

Милитси, йулташ Павлăв, çавăнта пулнă та вăл хвачши укçана курсанах палласа илсе чиксе кайнă кĕнеки мĕнĕпех.

Пайанченех çав укçа çинчен хыпар çук. Çавăнпа «Капкăн» урлах калатăп: çав ман вунă тенкĕ укçана Йетĕрнери проккурорсем те пулин леçсе памĕçши хачтерех тетĕп. Хачтерех кĕр майĕпе выçăхсем сутакан нумай тухаççĕ, пĕрпĕр хĕрарăма тыттарăттăмчĕ кайалла илсессĕн.

Кашни кĕркуннех хĕсĕр ĕнесем илеиле, чăхă пыршине сахăрпа ăшăтса çыпăçтарса купчака туса пĕтĕ ĕне тесе, пилĕкшер пăт тырă ыглара х илкелесе йулаканчĕ. Çапла çав, шăлăмсем.

КУÇ.

---

— Арăм, тет пўрте чупса кĕрсе, еп пасара кайсан сан çумăнта кам ларчĕ? Кала тўрипе. Каламасан шарит тăватăп!

Арăмĕ, чуста çăраканскер, Пракух ухмаха йерничен хăраса ўкрĕ. Ухмах çын умĕнче нимĕн каласа та тўррĕ тухас çук, тенине аса илсе нимĕн те шарламарĕ. Пракух тулган пушă илсе килчĕ те, тапратрĕ арăмне вĕтелеме.

Хĕнерĕ-хĕнерĕ, хĕнерĕ-хĕнерĕ. Миçе минут хĕнеине тĕрĕссипе калаймастпăр. Хĕнесе ывăнсан чарăнчĕ. Хăй прахут пек хашкаĕ. Хашкаса тăранаймасăрах, пўртрен сиксе тухса урам тăрăх вĕçтерме тапратрĕ. Йеруплан пек кайаĕ. 7—8 çухрăма ларма кайнă хĕрне çур сехетре çўсрен тăпкаласа килет.

* * *

Çавăнтан кайран Пракух веç улăшăнса карĕ. Кунĕн çĕрĕн арăмĕпе хĕрне сыхлаĕ. Пасара та тухмасĕ. Пĕтмелли пурăнăç çавăн пек çав! Çĕрле кушак хыçкаланаĕи, Пракук арăмне хĕнеме тапратаĕ. Рычаксăр çывăрмасĕ. Мĕн чухлĕ хĕнемен пуç вăл арăмне. Пĕре, армантан таврăнсан, кил картинчен йатă тарнине курнă. Ку арăм çумĕнчи йĕкĕт тесе пўрте кĕрсен çывăракан арăмне пусма тăрса çара уран хăваласа йараĕ. Урамĕпе каравул тенĕ сасă йанăраĕ. Çынсем чупса пынине кура вĕсене те пусма тăраĕ.

Пит нумай пулнă ун пек йапаласем. Шутласа та кăларас çук.

Пĕтрĕ Пракух пурнăçĕ. Аппаратне те пăрахрĕ. Сĕнтĕр-вăрринчи пйанчушкăсем Пракух ерех леçсе парасса кĕтнĕ-кĕтнĕ, чăтайманнипе русски корки текеннине ĕçме тапратнă.

Иалта Пракухпа арăмĕ çинчен анчах калаçаççĕ. Интереснă, вĕт! Хаçат та кирлĕ мар. Хаçатра ун пеккисем çинчен пĕлеймĕн. Çавăнтан вара çав йал çыннисем хаçат илме пăрахрĕç.

Хăçан вилĕши вăл Пракух? Хаçата упыткă. Тупата!..

ИЛСАРАИ.

# Пӗр пӑт сӑри.

(Хресԏен токлаԏӗ).

Ийуԏ уйӑхӗнԏе ыраш вырса пӗтер тӗмӗр: ыраш вырса пӗтернӗ йаԏӗпе пӗр пӑт сӑри турӑм.

— Виҫ курка сӑра ӗҫме пыр, кумма! ыраш пӗтернӗ йаԏӗпе—сӗлӗ вырма тухиԏен... Кӑна ӗҫсе йатӑмӑр, сӗлӗ вырма тухрӑмӑр. Сӗлӗ вырса пӗтертӗмӗр. Сӗлӗ вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн тепӗр пӑт сӑри турӑмӑр.

— Тӑхлаԏӑ. сӗлӗ вырса пӗтернӗ йаԏӗпе пӗр пӑт сӑри турӑм, пӗр виҫ курка ӗҫме. Халех тырӑ акас ҫук-ха.

Виҫшер курка ӗҫрӗмӗр. Ыраш акса пӗтертӗмӗр, авӑн ҫапма пуҫларӑмӑр.

Майӗпеле авӑнне те ҫапса, тирпейлесе пурана хыврӑмӑр. Кӗртрӗмӗр. Авӑн ҫапса тыр-пул тирпейлесе пӗтернӗ йаԏӗпе тепӗр пӑт сӑри турӑмӑр.

— Виҫ курка ӗҫме пыр, кума. Тӑхлаԏа та ыран ԏӗнтерӗпха. Кама тивмест виҫ курка, калаҫкаласа ларӑпӑр...

Халӗ пурӑнатпӑр ӗнтӗ. Типпе тухасси инҫе мар.

— Старик, авӑн йашки ҫийӗпӗр и мӗн, тырӑ-пулӑ пур ԏух.

— Ҫийес карԏӑк, пӗр 5 пӑт сӑри тусан ҫитет. Кама тивмест виҫ курка...

Авӑн йашки турӑмӑр; йал-йышсене ԏӗнтӗмӗр. Виҫшер курка ӗҫтертӗмӗр, пилӗк пӑт сӑри пӗтертӗмӗр. Халӗ хӗле кӗтӗмӗр. Вутӑ шайкӑ турттартӑмӑр праҫниксем ҫитеҫҫӗ.

— Старик, праҫниксем ҫитеҫҫӗ. Сӑра тӑвасԏӗ. Виҫмине раштав праҫникӗ, ара мӗнле сӑрасӑр ларатпӑр. Хӑйматлӑхсем ӗҫкӗ тӑваҫҫӗ пуԏ. Пӗр пиԏке илсе каймаллах.

Пӗр пӑт сӑри турӑмӑр; ӗҫкӗрен ӗҫке ҫӳрерӗмӗр—ҫӑварни ҫитертӗмӗр.

— Старик, сӑра пӗтнӗҫке. Пиԏԏесем, Унесӗмсем килеҫ пулӗ, типӗ мӗнле йарӑпӑр.

Пӗр пӑт сӑри турӑмӑр.

— Кӗрӳ, ҫӑварни йаԏӗпе сӑра турӑмӑр. Виҫ курка ӗҫме пыр. Ҫӑварни аԏине нумай кирлӗ мар. Шӑмат кун ӗҫес тетпӗр те, пымах тӑрӑшӑр ха...

Шӑмат кун, вырсарни кун ӗҫрӗмӗр, ҫӑварнийе иртерсе йатӑмӑр. Халӗ мӑн кун кӗтетпӗр. Ҫиме какай та ҫук, сутӑн илме укҫа ҫук. Пурара ҫӑнӑх та пӗр кӑмака ҫӑкӑрлӑх анԏах:

А, ӑстарик, мӗнле ши мӑнкун йаԏӗпе типӗ ларасси. Камран та пулин кивҫен илӗтни мӗн пӗр виҫӗ пӑт. Тырӑ лайӑх пулсан ним те мар, тӳлӗпӗр.

Виҫӗ пӑт тырӑ кивҫен илсе мӑн кун сӑри тӑватпӑр; Мӑн кун пӑттине йеретпӗр, сӑра ӗҫсе йаратпӑр. Сӑра ҫӗпре ҫине анԏах йулнӑ. Мӑн кун лайх иртертемӗр.

— А. старик пирӗн ҫимелли пӗтсе ҫитрӗ.

Аҫтан та пулсан кивҫен илес пулаӗ.

— Карԏӑк, кивҫене кайиԏԏӗн уйа кайса пӑхас пулаӗ.

* * *

— Ну, карԏӑк, мӗнле пурнасах, каԏԏасем наԏар. Кивҫене кайсан та никам та парас ҫук. Ах! ԏун тарӑхаӗ! Пайан пӗр пӑт сӑри те, ыран пӗр пӑт сӑри: виҫ курка ӗҫме пыр та, виҫ курка ӗҫме пыр: миҫе виҫ курка ӗҫтертӗмӗр-ши: ҫитмелли тырӑ ҫитмерӗ. Миҫе пӑт сӑри турӑмӑр-ши? Ыраш вырса пӗтернӗ йаԏӗпе пӗр пӑт, сӗлӗ вырса пӗтернӗ йаԏепе тепӗр пӑт, тырӑ пулӑ пуҫтарса пӗтернӗ йаԏӗпе пӑт, авӑн йашки пилӗк пӑт. Халӗ сакӑр пӑта ҫитрӗмӗри, карԏӑк. Пилӗк. Раштав праҫнӗкӑнԏе тепӗр пӑт, ҫӑварнире тепӗр пӑт, мӑн кун йаԏӗпе тепӗр пӑт. Халӗ виҫҫӗ пуԏӗ. Паҫӑр саккӑрԏӗ, пурӗ вуннӗр пӑт пулԏӗ. А, карԏак, пирӗн тырӑ, сӑра туман пулсан, лӑпах ҫитетԏӗ мӗн. Халӗ кивҫене кӗмелле. Аҫтан тупас?

Ак тирпейлӗ пурӑнма вӗрӗнтет. Выԏӑх-ԏӗрлӗх суткаласа аран уйа тухкаларӑмӑр. Ҫӗнӗ ыраш выртӑмӑр, киле кӗртрӗмӗр, типӗтсе ҫапрӑмӑр, васкаса авӑртрӑмӑр, ҫӑкӑр пӗҫерсе ҫирӗмӗр. Отԏог пӗтертӗм. Курка ҫине курка тав туса ӗҫме каламастӑп.

МЕРТИАН.



# Ҫăпăрка.

(Иуптару).

Ҫулпала тулли лав пырат,
Ҫăпăрки лаша патĕвҫех йавăнат:
Пĕрре лаша ҫурăмĕ тăрăх
Выртат вăл ҫăсăлса,
Тепре хырăм айне кĕрет,
Йе турта тавра пĕтĕрнет,
Ие тата, ҫул хĕррине ҫапăнса,
Кайри кустăрмапа йунашар
Ҫĕлен пек пырат выҫаса.
Ҫул такăр пулсассăн
Ҫăпăркана та канлĕрех пулмалла.
Акă лупашка урлă каҫмалла.
Анаталла урапа хăйех анҫĕ,
Хăпарнă ҫух тата тăпах ҫарăнҫĕ.
Ҫитрĕ кунта ҫăпăркана ĕҫлеме.
Ак! Урапа каллах тапранҫĕ.
Ҫа ҫа-ҫа ҫа-ҫа-ҫа-ҫа!
Ҫăпăрки лашана:
Ҫине ҫине
Ҫурăм ҫине!
Хырăм урлă
Вирлĕ вирлĕ!
Ҫине ҫине
Ҫурăм ҫине!..
Ей! Урапа калла анат!
Кустăрма айне ҫул!...
Иурĕ, канмалла кăшт!
Ну, ата тата! ҫа ҫа-ҫа ҫа!
Тата тататататата! нумай мар!
Нумай мар! Нумай мар! Нумай мар!
Вăăт ҫапла! Хăпарҫĕ.
—Ну спаҫипех! Латнă хам пур,
—Кĕрсех ларнăҫĕ вĕт шăтăка!
Тесе хуҫĕ вара ҫăпăрка.

———

Ҫакăн йеверлĕ:
Пуйан Микик тарҫипе хиртен килет,
(Хăй прусна тăрах ĕмĕрне утса курман,
Иал ҫухĕнсем хăй патне пĕри те тара кĕмесĕр йулман).
—Килелле им? терĕм —Вара суха пĕтергĕм-ха! тет.

Н. ЕВТОКИМĂВ.

———

## Вак-тĕвек.

Мĕншĕн пайан ерех питĕ ĕҫетĕн?
— Ĕнер арăм пит тăварлă ҫитерҫĕ.

# Тирпейлĕх решимĕ.

Килйышра.



—Ек, паратăмҫĕ те еп ҫана, анҫах тирпейлĕ пулма калавă. Пĕре ҫапнипе ҫитĕ пуҫ.

## Кам мĕнле тирпейлĕх решимĕ тытат.

Патăрйел уйесĕ, Курнавăш вул. Ҫут-Куҫ йалĕ хир кĕперрине тўрлетсе тăманнипе лаша ури кайса хуҫăлса лаша хуҫине ҫаран сутса тулевĕ.
Пулат ҫав тĕнҫере пĕр вĕрлĕке тирпейлесе ҫаран утта пĕтерекен!

### Йелҫĕк пуҫнитсин фершăлĕ

опператси тунă ҫух пĕлмесĕр хырăмне пĕр ҫăмакка мамăк ҫиксе хăварнă.
Леш, ҫынни, вара тирпейленнĕ.

### Икĕ уралла мулкаҫсен тирпейлĕхĕ.

— Ҫавруk, есĕ мĕншĕн унта пăҫăхса выртатăн?
— Есĕ илтмеви-ха хаҫ тирпейлех решимĕ ҫивҫен калаҫнине.
— Апла сентресене пушă тăратса таса, тирпейлĕ тăратас терĕн-им?
— Ҫук, пилет илес укҫана вăсйере тирпейлес терĕм.

ПУСНАР.

# ЕНЕНМĔ ХĔН.



— Атте, атте! Акроном килнĕ.

— Суйатăн, шеђмă! Халех килме пултараймасть, сайавленине пĕлтĕр анђах панăђĕ. Пĕр иквиç çултан килĕ.

# ШКУЛА ВАРАЛАТ.

Асакасси вулĕçтăвкомĕ халăх укçине тирпейлĕ тытса йалти шкулсене йусама тăрăшать. Унтан хĕссе хăварать, кунтан хĕссе хăварать, хăйĕн хĕсĕк пўтшетĕнђен Мăн йалти шкул картине тытма укçа парать. Анђах уђиттĕл Аксайĕв ереке ĕçме йуратать. Пурăнаймасть вăл унсăр пуçне Йапалисене саклата хурса пĕтернĕ, йулашки сăмаварĕ те саклатра выртать. Çынсенђен кĕтмелле сăмакункă илсе парăма кĕрсе пĕтрĕ Çынсем ăна шавми пулаççĕ, кĕтмелле никам та парасшăн мар.

— Пулђĕ укçа—савăнать вăл вулĕçтовкомран шкул картине йусама укçа илсен. Анђах шкул картипе мĕн тăвас пулать ха?

— Стоп!—тет вăл хăйĕн çамкине çапса—„итейă"!—Çак шухăшпа вăл Митри Пурхами патне васкаса кайать.

— Мĕн ку пайан пирĕн Аксайĕв пит васкаса çўрет, теççĕ çынсем. Васкамасăр—шкул карти тытма пĕренесем кирлĕ.

— Сут мана пĕренўсене!—тет вăл Митри Пурхамине.—суг, шкул картине йусамалла.

— Мана мĕн—тет лешĕ укçана пар та илсе кай.

— Укçине кайран парăп, укçа пур, вулĕçтăвком пађĕ—тет вăл савăннипе куçне хĕскелесе.

Пĕренисене илсенех çуртарма тытăнать. Хăма çуракансем ĕçе тытăнаççĕ. Аксайĕв ĕçме ђуптарать. Ђылайрапа ĕçменђĕ, ăшĕ кансах кайрĕ. Хăма çуракансем ĕçне пĕтереççĕ анђах... хальђенех ĕçшĕн укçа парса татмарĕ, тесе йатлаçаççĕ. Пĕрене хуçи йатлаçса туса тăмасть, пĕрене вырăнне хăмасене хăй патне турттарать.

— Спаççипă сана, çуртарса панăшăн, тет вăл ăшĕнђе. Ун вырăнĕнђе кам спаççипă каламĕ.

Çапла шкул карти сăмакункăпа йухса кайрĕ. Аксайĕв хăй вырăнне шкула ђĕпĕлĕ ђăх хупса хăварать те „хăй çĕпе" тухса кайать... Ђăх мĕскер вăл?—ун ответђĕ мĕнĕ хăйпе пĕрлех! Хăйне шкула хуçа туса хăварнипе савăнса сĕтел тăрăх хăйĕн краскипе сăрласа „кăриклĕтсе" çеç çўрет. Ђĕпписем парттăсем тăрăх „пиплегсе" çўреççĕ. Уђиттĕл вырăнне йулса, вăл хăй ђĕпписене мĕне вĕрентнине никам та пĕлмест. Питех асгуман пулмалла, ђĕпписем партăсене ђăп ђăпар туса пĕтернĕ.

Йалта пуху пуçтарăнсан шкула уçса пăхаççĕ те... актă çыраççĕ.

Çапла ĕнтĕ Аксайĕвпа пĕрле ђĕпĕлĕ ђăхăн та сута каймалла пулать. Шкула ан варала, Аксайĕв варлани те çитĕ!

С—Н.

# Веççеловпа Муравйов.

Веççелов тенӗрен есӗр пӗр-пӗр „веççӗлӑй“ йапала çивӗҫен çыраҫ тетӗр пуҫ. Çук... Веççелов вӑл пирӗн вулӗçтӑвком ҫленӗ. Пирӗн вулӗçтӑвкома „Тӑвай вулӗçтӑвкомӗ“ теççӗ. Веççелов текен çын çак Тӑвай вулӗçтӑвком ҫленӗ ӗнтӗ вӑл.

Муравйов текенни те çак вулӑсрах ӗçлет. Вӑл Çӗрпӳ уйесӗнҫи 2-мӗш районри, Тӑвай вулӑсӗнҫи милитси. Ӑна „волосной милитсионер“ теççӗ пирӗн.

Ку ӗнтӗ, куртӑр пуҫ, иккӗшӗ те наҫар çынсемех мар, ҫаплӑ çынсем. Çав ҫаплӑ çынсен ҫаплӑ ӗçӗсем çинҫен каласа парас тетӗп сире.

Акӑ ӗнтӗ Веççеловне илсе уйрӑм тыткаласа çавӑркаласах пӑхар. Акӑ çакӑ ӗнтӗ Веççелов—Тӑвай вулӗçтӑвком ҫленӗ. Сарӑрах çӳçлӗ, куç пусӗ ҫейелле пӑхкалаççӗ, вӑрӑмах мар, лутрарах çын. Ерех ӗçме йуратакансккер пулас, ак ерех шӑрши килет. Шӑршласа пӑх ха, килет вӗт?

Килмесӗр, вӑл вулӑса кӗлт пӗҫӗк ӗç тума тухсассӑн та, самакона ҫетвӗрҫӗ çинҫенех сыпаҫ. Акӑ хаҫ Елпусне пырса пӗр тӑлӑх аҫавне—Рикка Кӗçтенкинне сурӑхне çӗклесе кайрӗ. Хӑй самакон ӗçсе тултарнӑ сывлаймасҫ те.

— Мӗншӗн есӗ, Веççелов, тӑлӑх аҫасен сурхиве анҫах çӗклев, вӑрман штравне пуйансем те нумай çке ха тӳлеменни,—тесен (вӑрман штравӗ тӳлеттерме пынӑ мӗн вӑл):—„Урапа сӗрмесӗр ҫупмас“, йе тата „тип кашӑк çӑвара çураҫ“ тенине мавнӑ-и есӗр?—тесе хураҫ мур!

Ну ӗнтӗ пӗлтӗри Веççелов мӗнле çын иккенне? Пӗлнӗ пулсассӑн малалла кайӑп.

Малалла тепӗр йулташне Муравйов не йарса илер. Кӑна та çавӑркаласа пӑхӑпӑр. Ну, есӗр, ӗнтӗ ку милитсионер-ха, самакон ӗçмест тетӗри?... Çук. Апла мар.

Акӑ пӗркун Урас-кассинҫе Микулай Иаккӑҫҫа Илйе Иванҫӑ хӗнесе пӗтер вӗ тенине илтнӗ пуҫ?.. Илйе Иванҫӑ Микулай Иаккӑҫҫа йалтах хӗнесе пӗтервӗ вӗт. Микулай Иаккӑҫҫӑ ҫӑтаймасӑр милитсисене хут (сайавлени) çырса параҫ. Ну çак хут тӑрӑх тӗрӗслесе пӑхма тесе пирӗн (волостной милитсионер—Муравйов Урас-кассине 3 хут ухса авҫӗ

Малтанхи хут пынӑ ҫух Илйе Иванҫӑ патне кӗрсе самакон персе ӳсӗрлет те, топрос тумасӑрах тухса кайаҫ. Тепре пыраҫ. каллех ӗçсе усӗрӗлсе топрос тумасӑрах тухса кайаҫ.

3-мӗш хут пырсассӑн Илйе Иванҫӑ патӗнҫе ташла-ташла ӗçрӗ те, тепӗр кун кунне аран топрос ҫукаласа кайрӗ. Хӑй мухмӑрпа çӑварне каркаласа анасласа авҫах лараҫ.

Пирӗн „Капкӑн“ та хаҫхи вӑхӑтра çӑварӗсене каркала пуçларӗ. Те Веççеловпа Муравйов йулташсене хыпса илесшӗн?—пӗлмерӗм. Вӗсене хыпасшӑн пулсан лайӑххӗ

КАПКӐНÇА ҪӖППИ.

# Ӗçленӗ ҫухнехи калаçу.



— Пирӗн кретит йулташлӑхӗн правленийӗнҫе ларакан çынсем, çултаlӑк çитрӗ ӗнтӗ, пӗрле—пухӑнса лармавҫе, халӗ пурте пухӑннӑ.

— Мӗн ӗçле пухӑвнӑ?

— Халӑх пурлӑхне тытма пӗлменшӗн сута ленкрӗç те, хаҫ пурте сут скамйи çине пухӑнса ларнӑ

# Кури Йаккӑлҫҫӑ.

(Волшевин майлӑ).

Шӗнерпусӗнҫи пуп Кури Йаккӑлҫӑ, аҫаранпах суккӑр ӳснӗ сынсен кусне тӳрлетеп, тесе каласа ҫӳрет. Ун патне кусӑррисем ҫылай пыраҫҫӗ. Тӳрленекенсем ҫук.!
„Канашӑн" 198 (1666)-мӗш нумӗрӗнҫен.

Иуратнӑ краштӑнсем, ман шухӑшпа, тийаккӑнӑн пас пулмалла.

Ак, сӑмахран калас, амвон ҫине тӑрса, „пакки-пакки" тенӗ сӑмахсене те вӑрпа, йе уй хапхи алӑкӗ пек ҫӗрик летекен саспа калакан тийаккӑн,—тийаккӑн пулаӗ-и вӑл, ҫава тӗпне каймансксер!

Ие пупах илер, вӑкӑр пек мӗкӗрекен паслине. Пупӑн сасӗ, сӑмахран калас, тӳнтер майлӑ пулмалла, тийаккӑн пек мар: ҫӗтренҫӗклӗ тенӑр, ҫитӗнерех ҫитнӗ путекӗн пек.

Ҫапах та пирӗн пуп Кури Иаккӑлҫӑн пыр шӑтӑкӗ паспа кӗлтума вӗреннӗ пулин те, халӑх кӑмӑлне кайнӑ.

Паллах ӗнтӗ—тӳрӗ кайакан пулӗннӗ, ҫавра кайакан савӑннӑ. Пуп ҫавра ҫулпа кайнӑ.

Ҫавра кайакан ҫулпа унӑн ҫакӑн пирки каймалла пулнӑ. Тӳрӗ каласан, пирӗн йал краштӑнӗсемпе хӗрарӑм краштӑнсем, пуп паспа кӗлтунине йуратми пулнӑ. Мӗн унпа, мӗкӗрекен вӑкӑрпа! Тийаккӑн пулсан... тийаккӑнӑнне итлеме лайӑх, мӑн каккӑрлӑ трупа пек. Тата, ҫийӗнҫен, турри те хаҫ ҫук пулнӑ, тет, хӑйамат!

Вӑт вара Кури пуп, куккӑр ҫулпа кайсан ҫу хыпмаллине сиссен, хӑйӗн пасне урӑх вырӑн тупса панӑ.

Ӗҫӗ ҫкпа пуҫланнӑ Иатратси Иакурӗ, хӗрӗнкӗрех пулнӑ пирки, пирӗн Кури Иаккӑҫҫӑпа вӑрҫса илнӗ те, пенӗ йанӑ:

— Сан, тет, ку паспа, тег, турра пуҫҫапма мар, йӗрӗхсене хӑваламалла тет.

Пупӑн малтанах куншӑн мӑкӑрлантарас шуҫӗ пулнӑ та.. Калани усӑллӑ пулҫӗ.

Тапратрӗ пуп йӗрӗхсене хӑвалама Иӗрӗхсене авҫах мар, тӗрлӗрен тухатмӑш ӗҫне те тума тыгӑвҫӗ: тӑшман ҫине вилӗм йараӗ, шайтгансене хӑвалаӗ, шӑл сурнине тӳрлетет, вилме выргнӑ сыснасене ҫӗртет, куҫӑхнине сирет, ерех кӑмӑла кайасран хӑгараӗ, тата аҫа ҫуратакан хӗрарӑмсем кӑшкӑрма тапратсан папашкӑ пулса ҫӳрет.

Пур ҫӗрте те хӑйӗн пасӗпе усӑ кураӗ.

Ак, сӑмахран калас, йӗрӗхе хӑвалама пулсан, ҫапла мӗкӗрет:

Иӗрӗх хӗрӗм,
Тух, хӗрӗм,
Авраам ӑраттинҫи
Рай ҫывӑхӗнҫи
(Иатне кала) ҫынтан!
Тухмасан сана
Таса шывпа
Пӗҫертӗп
Тӗп тӗп-тӗп,
Пӗрӗхӗп,
Хӗп хӗп-хӗп!
А-а-аминҫ!

Ие комсомолран:

Ей, пушӑ, турӑ
Ҫак антихристӑ
Ҫурине (йатна кала)
Комсомол мурӗ
Иересрен сыхласа тӑр!
Комунран шайтганран
Тарнӑ пек тартӑр айван,
Аллине алилуйа тыттӑр!
«Сайра майакне» сайа йарӑр!

Пит хӑватлӑ йурлаиӑ. Кантӑк ҫуреҫисем ҫӗтренсе ҫеҫ ларнӑ.

Карҫӑксем ун сассине йуратса пӑрахнӑ. Паспа кӑшкӑрма тапратсан:

«Уҫсам куҫна, Наталли!
Тух унтан, хӳрелли»!

Ҫан ҫурӑм ҫӳҫенсе илет.

Нумай ӗҫлерӗ куҫтгурӑ тӗлӗшпе: 50 ҫухрӑм хушши пурнакан йумӑҫсене пӗтӗмпех ҫӗнтерсе илҫӗ.

Кайран килӑшуллӗ мар ӗҫсем тухса карӗҫ. Ваҫли Хӗлӗпӗн, куҫран ҫутӑлтарса йараканни пулмасӑрах, икӗ куҫӗ те ыратма пуҫланӑ. Тикӗт сӗрнӗ тӳрленмест, уйран сӗрнӗ усӑлмасӗ, тапак сӗрнӗ—усси ҫук.

Пуп патне кайаҫҫӗ.

Пупӗ турӑ тумтирӗсене тӑхӑнаӗ те, ҫитмӗл те ҫиҫӗ тинӗссене асӑнса ҫӗлхе калаӗ.



# Ђ Ă П Т А  Й У Р Р И.

(Шупуççынни йурри мар).

Йухан шывăннах йухасшăн
Ђăвашпроисвотсойус.
Пур çакана сӳсе тăкăп
Ђăпта тĕртĕп, тет ку йус.
Анђах курăссем йухаççĕ
Ђастнăй ђăптаççем патне;

Лах-лах!—латсах куласçĕ
Илйин хуçа склатĕнђе.
Çăвар карсах вывтаӗ-ха
Ђăвашпроисвотсойус,
Пĕр вĕçĕмсĕр йурлаӗ хăй,
Йурлаӗ „Ђăпта йуррине“

---

Васлин куçĕ тӳрленмест. Пушшех ыратаӗ. Вилес пекех ыратаӗ, куç ырат вине тӳрлетмелли кĕлĕ калас вырăнне, пуп васканипе. ĕвесем вăхăтсăр пăру тăвасран каламалли кĕлле калаĕ.

Ку кĕлле тӳнтер майлă тума май килместши, тесе пађăшкă патне кайса пăхнă та, лешĕ:

— Йурамасӗ. Пурте турă аллинђе, Турă каланă пуђ мана тӳнтер майлă калама, тенĕ.

Ун çинђен вара «Канаш» та пĕлнĕ. Статйа çырнă.

Çырмасăр, тепĕр, тесен! Ес çеминарэнђе вĕреннĕ пулсан хутла пĕлетĕн, кирлине вула, кирлĕ марринэ ан вула!

Халĕ ĕнтĕ вăхăтлăха паспа йурласа ђĕлхесем калама пăрахрĕ.

Халĕ каллех йумăç кăрђăксем ĕçлеме тытăнђĕç! Ей, мĕн пултараççĕ ара вĕсем пуп çумĕнђе!

Вĕсен пас çук. Паллах ĕнтĕ вăл кăрђăк тени, ун тискăнтла тенăр.

## Мĕн вăл?

Ĕç ĕçлесе ывăнсассăн,
Вырăна канма выртсассăн
Мĕн пирĕн ђуна уçаӗ,
Мĕн, хуйăх пуçа çапсассăн,
Пурнăç çулĕ кукăрăлсассăн
Пире çăмăллăх параӗ?
Мĕн вăл çав пур вăхатра та,
Ĕç пулсан та, пулмасан та
Пурнăçа илем кĕртет?
Мĕнле ырлăх ватта та.
Сухал шатман çамрăка та
Ђасах хĕпĕртеттерет?
Çавă пулаӗ, йулташăмăр,
Хамăр çывăх тăванăмăр
Йалан хавас «Капкăн» тус.
Хакĕ йӳнĕ—вунă пус.
— Пайан анне йаска çине вітăр кайăк йарса пĕшернĕ.
Илĕр вулăр, хытă кулăр
Уçăр хăвăрт ђунсене!
Çырса илĕр
Вунă пуслăх „Капкăнне“!
А.ÇУЛĔÇ.

# ЕПӖ МЫСКАРА КУРСА ҪӲРЕНИ.

(Пуҫламӑшӗ 14 мӗш №-те).

Ҫӗрпӳрен уткӑнса тухрӑм та, пралукла ҫулпа уттартӑм. Ту хӗрне ҫитсен ҫулйунпи тӗл пулҫӗ. Лартӑм та, таран шухӑша карӑм:

— Хӑш ҫулӗшн ӗнтӗ кунта тимӗрҫ патнелле илсе кайакани?-тетӗп.

— Ҫырса хуни ҫукши?—тесе, йӗри тавра пӑхкалатӑп. Нимӗн те паллӑ мар таса хир вӑрринҫе.

Кӑштах ҫывӑрса кайнӑ. Тӗлӗк курса выртап пек:

«Йалӑмкас вулӑсӗнҫи Октикасси йалӗнҫи куштан усламӑҫ—пуйан Иван хӑйсен йалсовет претҫетаттӗлне Поклаккова ҫавӑрса илнӗ те, хӗртсе, пуҫӑсене ҫурса ҫӗпҫӗр вуҫ туса, вӗлерес патнех ҫитерҫе пек.—Мӗншӗн аҫла хӑтланатӑн?—терӗм пек еп. Сана мӗн ӗҫ? Еп викамран та хӑрамастӑп. Мӗн ҫамрӑкранпах сутра пиҫӗхнӗ еп. Йалсовет претҫетаттӗлне хӗртвӗшӗн те мана сут нимӗн те тӑвас ҫук! Манран пӗтӗм йал хӑраса тӑрат! тет мана хӑм сарса.

Хӑранипе шартах вӑранса карӑм. Ман умра пӗр ҫын тӑра парат.

— Мӗнлескер ес? тетӗп.

Мӗн мӗнлескерри? Кӗҫкей вулӑсӗнҫи Услӑпукаш йалсовет ҫленӗ еп, Ҫурмак Иемеҫҫӗ теҫҫӗ мана ухмаха. Вилес патнех ҫитрӗм авкустӑн 27 мӗшӗнҫе, хамӑр йалти сӑмакун сават хуҫи Ҫимйун патӗнҫе сӑмакун ӗҫсе. Пӗҫҫенех те марҫӗ—арман хуҫийӗ Иван Митриҫпа пӗр пулштух ӗҫнӗҫҫӗ. Ҫавӑнтан пӗтӗмпех ӑнсӑр пулса, хаҫ вилес патне ҫитетӗп, тухтӑр патне кай терӗҫ те... Темӗнскер ҫав Ҫимйун наркӑмӑш йарса ӗсӗртет теҫҫӗ, тата килӗнҫе вырӑс ҫирӗ те пур теҫҫӗ пулмалла.. лешне йарса ӗҫтерместши вӑл сӑмакун хуҫи тесе? тухтӑр патне кайасҫӗ вилеҫҫен... терӗ те, хӳллен пӑрӑнса шурӗ пӗр ҫулӗпе. Епӗ те хуллен тӑрса, кун пек латтисӑр ҫынпа кайма хӑрушӑ тесе, тепӗр ҫулӗпе уттартӑм.

Каҫ пулса тӗттӗмленҫӗ. Иатӑ сассисене илтсе, аран пӗр йалалла ҫавӑрӑнса кӗтӗм, ҫынсем выртса пӗтнӗ пулмалла, пӗр пӳртре анҫах хӑй ҫутти. Пӳрт умӗнҫе ҫеретпех халӑх тӑрса тухнӑ, арҫынӗ, хӗрарӑмӗ, хӗрӗ—пӳрте пур ку ҫеретре.

— Мӗнле йал ку, краштӑнсем?—терӗм еп ҫеретри ҫынсене.

— Тӑвай пулат ҫак, Тӑвай вулӑсех терӗ пӗри пит хуллен, аллинҫи ҫетвӗрт кӗленҫине ҫӗре лартса.

— Мӗнле ҫерет ара ку сирӗн капла? Ай йала пурри мӗн сирӗн ун пекки?—терӗм еп татах.

— Йали пур ҫӗрте те пӗрех пуҫ вӑл—терӗ пӗри каллех: кунта халӑх суҫӗн ҫекретарӗ Иван Миронҫӑ Ашмарин пурӑнат. Сут ӗҫӗпе вӑл кӑнтӑрла пыма хушмаст, каҫпа хӑй килне кӑна ҫӗнет. Хаҫ кунта пайан кӑнтӑрларанпах тӑратпӑр—нийепле те ҫерете кӗтсе илейместпӗр. Хӑй калана пек «типӗ кашӑк ҫӑвара хырасран» ҫуттине те ҫителӗклех ҫиксе килнӗҫӗ те...

— Хӑштисем ес? тетӗп мапа калаҫаванне.

— Елпуҫӗнҫи Христун еп. ҫӑлахскернех мана ҫапла ҫӳретсе хупланта-рат,—терӗ.

Тарӑхнипе ниҫта кайса кӗреймесӗр, тӳрех Ашмарин патне, ҫеретсӗр-мӗнсӗрех пӳрте ҫӗмӗрттерсе кӗтӗм.

Ларат хаҫки Ашмарин теконни кӗрекере, сӗтел тулли путылккӑ, йӗри тавра хӗрсем, йашкӗрӗмсем...

— Кхм... Краштанин Ашмарин! Ҫерет кӗтсе пулаймарӗ, ҫеретсӗрех итле мана... Еп сан ҫинҫен „Капкӑн“ хуҫвве сута парасшӑн, йурати, йурамасти?—терӗм сӗтел патнерех ҫывхарса.

— Пултаратӑн, тет хаҫхискер, ӗсӗрпе аран ҫӑварне уҫса: Анҫах пултарайӗши мапа „Капкӑн“ хуҫи? Еп куркаланӑ ҫын. Еп йалта кашнинҫен 10-шар пӑт ыраш пухса, хама ваҫҫи ӗне, купӑс, кӑрмафон тата ытти йапаласем те илтӗм те, ҫапах мана нимӗн те пулмарӗ, мӗншӗн тесен ун ҫухне еп... кӑмсамул ҫекретарӗҫҫӗ... Вулӗҫтӑвкомра ӗҫлене ҫухне вӑрланӑ лашасемшӗн карттӑҫкӑ та панӑ та, уншӑн та нимӗн те пулмарӗ—вырӑнтан анҫах

кӑларса йаԏӗҫ. 1923 мӗш ҫулта, Рапфака кӗрсен 25 пӑт тырӑ сутрӑм, унпӑн та кӑларса анԏах йаԏӗҫ. Унтан Уԏйавӑвскри техникӑма кайса кӗтӗм, унтан та вӑрланӑшӑн кӑларԏӗҫ кӑна. 1924 мӗш ҫулта 4 мӗш уԏаскӑра сутӑйара пурӑнтӑм, унта „йа кто" тесе ҫӳренӗшӗн ҫулталӑк ҫурӑллӑх условнӑ лармалла турӗҫ. Кун хыҫҫӑнах тата 3 ҫуллӑх условнӑ хупмалла турӗҫ. Ҫапах та.. ҫапах та хаԏ мана сутӑн ҫекретгарне илԏӗҫ. Сутӑйа „хамӑр" ҫын та, пыраԏ. Кӑҫал ийулӗн 29 мӗшӗнԏе 25 пӑт тырӑ сутнӑшӑн сута кайвӑ ԏух, хамӑн сутӑйа мана епӗ ырӑ, лайӑх ҫын иккенни ҫинԏен хут ҫырса паԏӗ.. Мӗн тӑвӗ ӗнтӗ сан „Капкӑн" хуҫи? Мава никам та тӗкӗнеймӗ... текелесе тата нумайԏԏен каласа лараԏӗ пулӗ те, тул ҫутӑлса килнипе еп тухса утрӑм хӑвӑртрах.

Урамра ԏерет саланса пӗтме пуҫланӑ, пӗр хӗрарӑм анԏах тӑрса йулнӑ.

— Кама кӗтетӗн, хӑштисем ес?— тетӗп.

— Еп Шемшер вулӑсӗнԏи Вӑрмер йалӗн арман хуҫин Микитка Ваԏкким арӑмӗ—Орик пулатӑп... кунта килмелле марԏӗ те.. кунта каҫпа принимаԏ тӑваҫҫӗ тенӗрен анԏах килтӗм.

— Мӗнле ӗҫпе вара?—

— Мӗн мӗнле ӗҫ! Ман упӑшка ҫуркуннесем арман пӗвисене йуриййех татса йарса, йал ҫаранӗсене ҫӗмӗрсе пӗтерет, акнӑ тырӑ ҫиве выԏӑхсене йарса сӑтӑр тутарттараԏӗ. Хаԏ ҫапла хӑгланнӑшӑн халӑх тарӑхса ҫитрӗ те, армантан пӑрахӑҫ тутарас тесе, товӑ вӑрне пасма сута паԏӗ. Ман упӑшка ухмах мар: армана арӑма сутрӑм тесе, сута каймарӗ, мана йаԏӗ вара... Те мӗнле ӗнтӗ, тен хӗрарӑм хӳттипе ҫӑлӑнасшӑн пули мӗн...—тесе, пӑрӑнса утрӗ.

Канаш стантси йеннелле вӗҫтертӗм. Шӑхасан вулӑсне кӗрсен, Сител хирӗ урлӑ каҫсӑ ԏух, пӗр ана вырман ыраш выртнине курах кайатӑп. Ман телейех вӑрманалла пӗр хӗрарӑм васкаса кӗрет, аллине пӗр ԏетвӗрт йатнӑ.

— Ӑҫта вӗҫтеретӗн, сар инке?—тетӗп тутасене ҫуласа илсе

— Вӑрманта мӑйӑр вумаԏ пулнӑ кӑҫал та, татма йаман-ха. Ҫак ҫуттиве вӑрман пӑхаканне—Ԏава Ваҫлиҫне кайса ӗҫтерес терӗм. Еп, ара, сӑмакон саваԏӗ тытапҫке, савӑтра „ӗҫленӗ" майӗпе хирти ыраш та ана ҫинех йулԏӗ... Ахаԏрен мар ҫав мана Мокри Матки теҫҫӗ йалта... терӗ те васкасах вӑрманалла ԏупрӗ.

Ним калама пӗлмесӗр, алла шарт ҫапса, утрӑм вырман ыраш хӗррипе.

...Аран-аран Канаш стантсине ҫитрӗм. Тӳрех хула кооператтивӗн ԏленӗсен пуххине кӗрсе карӑм. Кунта та мыскара курмалла пулԏӗ: Кӗрессе кӗтӗм те.. тухасса шанмарӑм ку пухуран!... Мӗнмӗн илтмерӗм пуԏ, ыр мӑн турӑ, ҫырлахсамӑр анԏах, еп кунта!..

— Кооператтив прегҫегаттӗлӗ Солтаттӑв Микули апрелтен пуҫласа ийуле (3 уйӑх хушшинԏе!) 1 600 тенкӗ кооператтив укҫине салатнӑ.- Хусансенԏе проститтуткӑсемпе ҫапкаланса ҫӳресех кооператтив ӗҫне „тунӑ". Макаҫӑн пуҫлӑхӗ Ушков 700 тенкӗ салатнӑ, пӗтӗмпе 2 300 тенкӗ!..—

Пуҫкуҫ хупланса килнипе ԏасрах тухса тартӑм пухуран та, кунтан пуҫпах тарас тесе, вакзала пилет илме пырса тӑтӑм.

— Солтаттӑв—партти ԏленӗ, хула совеԏӗн ԏленӗ—ԏаплӑ ҫын... тесе шаккаса тӑраԏ хамӑн пуҫра. Сасартӑк попйӑс кӑшкӑрса йаԏӗ. кассӑ ԏӳреԏи уҫӑлԏӗ

— Кута вам?—терӗ пӗри.

— Вырӑсла пӗлместӗп ҫав еп, краштанин!— терӗм те, йунашар тӑракан вырӑсла пӗлекен ԏаваша Иепреҫе ситеԏԏен пилет илсе пама ыйтрӑм.

— Пӗр ԏаваш та пулин лартма йурамасԏ-ши Ԏаваш респуплӗкӗнԏи стантсӑсемпе пристӑнҫене... тесе Иепреҫе ҫитиԏԏенех шухӑшласа карӑм вара хамӑн ухмах пуҫпа. Шупашкара ҫитсенех Тӗпӗҫтӑвкома кайса калаҫма пултӑм—мӗнле пулӗ ӗнтӗ.

Акӑ еп Иепреҫре. Иӗри тавра пӑхрӑм та, хула пекки ним те ҫук. Ԏукувҫул хӗрриԏԏех пӗр ҫӗнӗрен тӳрлетсе лартнӑ икӗ хутлӑ ҫурт лараԏ. Тӳрех ҫавӑнта уттартӑм.

— Ма хуллентерех ҫӳреместӗр ҫав есӗр ԏукунҫулпа!.. Кӗмсӗртеттерсе иртсе карӗҫ ҫав—кӗҫех пӳрт йатӑнса анаԏӗ, пурте тухса тарса пӗтрӗмӗр.. хуллен ҫӳреҫ ӑна, ӑҫта васкамалла?—тесе кӑшкӑрса йаԏӗҫ мана курнӑ курманах 7—8 сасӑ харӑс. Хӑранипе кайаллах ԏакма пуҫларӑм.

— Мӗн пулԏӗ тата сире?—тетӗп

хăра-хăрах.

— Мĕн пуласси—уĕçтăвком 8 пин парса йусаттарнăҫҫĕ çак çурга, хаҫ кăмакисем çурăлса анҫĕç, пӳрт ăшне кĕмелли çук, пурте тарса пĕтрĕç ĕнтĕ кунтан пысăкрах вырăнтисем, сторăшсем анҫах пурнаççĕ хаҫ ниçта кайса кĕме çуккипе... теме пуçларĕ пĕри.

— Е-е-е! Есĕр ыгла иртĕнсе кайаттăр хăш ҫухне. Мана кăшт сывăрттарăрха вăт ку пӳртре, еп пĕр ик-виç кун сывăрмансккер тем пекех сывăрăгтăм кунашкал ик хутлă çуртра,—тетĕп сасса хăпартса.

Кĕрсе вырттрăм та, вилнĕ пекех сывăрса кайнă. Темскер хăнтăртаттарса кайнă сасă илтĕнҫĕ.

— Аçа çапмарĕ пулĕске?—тесе пуçа çĕклерĕм.

Ман тавра тем ҫухлĕ халăх пухăннă—лахлатса кулса тăраççĕ, аҫи-пăҫисем сиксе ахăраççĕ.

— Мĕн, аçа çапри мĕн?—тетĕп куçа уçса ҫармакланса пăрахса.

— Пойăс иртсе карĕ... Пăхха ав ху çине!— тет пĕри ман çине пӳрнепе тĕллесе кăтартса.

Пăхатăп—ман çинҫе хупхура пыҫҫăк, шыв йухса тăраҭ.

— Кам капла мăшкăлтăк пывне кăларса сапнă ман çине?—тетĕп кăшкăрса.

— Кам сапмалла—çӳлте урай çунă та, хăйех йухса аннă вăл,—теççĕ пĕр ҫарăнмасăр кулса. Пăхатăп лайăхрах пĕтĕм çанçурăм хăпарса тухнă хăнкăласем сыртнипе. Ҫасрах «Капкăна» хĕве ҫикрĕм те, вĕçтертĕм тухса ку тискер çуртран.

— Вăт тирпейлĕх решимĕ... аллисене çапса хуçасҫĕ çуртсене çакăн пек йусакансене,—тесе, çул тăршшипех йатлаçса пытăм.

Çапла ҫун хавалĕпе вĕҫĕхсе пынипе сисмесĕрех Мăрат вулăсĕнҫи Вăрман хĕри Ҫураҫăк хирне çитнĕ хам.

Мана хирĕç Вутлан поççолккинелле Таҫук Тимахви пĕр çĕклем кĕлте йатнă, вĕçтерсе пыраҭ.

— Мĕн ĕçлен ес?тетĕп.

— Мĕн ĕçленине хăвах куратăн ĕнтĕ.. Ҫураҫăкăн кĕлтисене хам паталла туртатăп, хаҫ пĕр виç урапа вăрласа кĕртрĕм ĕнтĕ... арăм кĕлте çыххисене улăштăрса çыхаҭ те, лешсем тупсан та паллас çук—тет хаҫхи Таҫук Тимахви.

Увҫҫен те пулмарĕ— Ҫураҫăк йенҫен пĕр пулккă халăх йатлаçса пыраҭ.

— Кашни çул кĕлтесем çухалаççĕ... кашни çул! Тупасҫĕ вăррине..—тевĕ сосăсем илтĕнеççĕ. Таҫук Тимохву çакна курҫĕ те, вăшт анҫах турĕ вăрманалла.

— Ай-йай, Вутлан сыннисем!... хăйсем çĕрне ерттелпе, пĕрлешӳпе ĕçлеççĕ. пĕрлешӳре çурри ытла партти ҫленĕсем, çапах та çакăн пек вăрра усраççĕ—тесе шухăшласа утрăм вара малалла.

Каç пулнă çĕре Хурамал вулăсĕнҫи „Молни" йатлă йалхуçайстви ерттелне çитрĕм. Ку йалта ҫаплă тухатмăш пур тенине илтсе. тӳрех ун патне ҫупрăм (тухатмăшсене курманни те нумай пулаҭҫĕ ĕнтĕ!).

Пӳрт варринҫе пĕр тиркĕ çине шыв тултарса лартнă, хĕррисемпе çуртасем çутнă, карҫăкĕ темĕнскер мăкăртатса лараҭ.

— Ман килес, вата кинемей!—терĕм еп.

— Килех, килех, ыр сăмахпа çӳрен пулсан.—терĕ.

— Куç пăвтарма килнĕҫҫĕ те, пăвса йамăнши, вăт килемей,—тетĕп ăна хирĕç.

Кăшт ларсан ман карҫăл кĕписене

## Кирпĕҫ çук.



— Кирпĕҫпе пуçа шăтарса пăрахрĕç.

— Кам? Кайса ыйтас унтан ăçтан тупнăши вăл кирпĕҫне. Çынăн пур кăмака йусамаллăх та кирпĕҫ çук, вĕсем персе çӳреççĕ. Аптрамалла.

хуса пăрахрĕ те, ман çума ларса, çапла пуçарса йаҫ°:

— Саманисем хаҫ урăх çав, турăсене, йĕрĕхçырăхсене ĕненми пулҫĕç, кĕлле çÿремеççĕ. Ман пата, те машкăласа, темĕн тĕрлĕ йапаласем килсе пăрахма пуçларĕç. Çавна еп антихристсен партийĕҫе тăракансем тăваççĕ пуҫ тетĕп. Çапла вара ман пата йапаласем пăрахса çырлахтараççĕ те, вĕсем сывлăхлă пурăнаççĕ. Пĕрне—кăмунисне тепĕйĕрĕпех тăвап тесе хăратагăпха, хаҫ аҫи вилҫĕ те, ăна та еп турăм те се çÿретĕп. Леш ҫăнахах хăрама пуçларĕ хаҫ..

Лат суртăм та, тиркине йăвантарса йатăм.

— Вĕлер ак мана, ухмах пуç! Еп сана ак «Капкăнпа» хĕстерсе лартсан ес славни пăркаланăн,—тесе тата тепĕр хут суртăм.

— Пăрах ес кун пек ĕçе, сантан хаҫ çапах нимĕнле ухмах та хăрамасť, тесе шаккасах тухрăм.

— Вăт тухатмăш тăк тухатмăш! Так хăй ухмаххипех тамăка кайаť ĕнтĕ çав вилсессĕн,—тесе шухăшласа пытăм çул тăршшипе ухмахран мăшкăласа: Ратио трупи çумне пыртарса иглеттересҫĕ ăна, електриҫĕстă çуттине кăтартасҫĕ çавах анттихрис вăйĕ тейĕ вăл етем тухатмăшĕ... тесе тарăхмах пуçларăм.

Ыванса çитрĕм ĕнтĕ, урасене аран-аран илсе пусаҫан пултăм. Шăмат кунхи пасара Кĕçĕн Иелҫĕке çитсе ўкес тесе, йулашки вăйранах утрăм. Çитрĕм çитрĕмех... Йелҫĕкре пасарта, ытти çĕрти пекех, ĕссĕр халăх пут нумай:

Пăхатăп та, ивĕ çын тем пĕр усламçă патĕнҫен теприн патне çўрэççĕ. Пĕрин портфĕлĕ тухса ўврĕ. Портфĕле илтĕм те, хăйсем патне пыраťҫен пĕр çынтан кусем мĕнле çынсемне ыйтса пĕлес терĕм.

— Çавсене палламастăни есĕ? тет Пĕри—вулăс финанс пайĕн пуçлăхĕ Ковон Кирилăв, тепĕри—уйесри финанс пайĕн инспектăрĕ. Вĕсем кунта кашни пасартах „тĕрĕслесе" çўреççĕ. Сутма илсе килнĕ йапаласене тытса илеççĕ те (реквиçитси тăваççĕ), ĕçкĕпе кайалла параççĕ. Конон Кирилăв налок хурас ĕçе те ĕçкĕпех тăваť...—терĕ.

Ку кайăксемпе интереслесе, хыççăнах утрăм, куçран çухатас марҫĕ тесе.

# Ҫейнире.



— Пăх-ха, Васли пиҫҫе, мĕнле економи тăваççĕ: ĕлĕк виç кĕренке кулаҫăра ултă пăтаран кайа пулман, халĕ иккĕ анҫах, кăсем те тутăхса кайăскерсем. Тирпейлĕх решимĕ тенине усламçăсем те тăнланса илнĕ иккен.

Ак темĕнле çурта кĕрсе карĕç.

— Краштанин, сан портфĕл ўксе йулҫĕ, на, пошалстă!—терĕм. Ман çиве хайар куçпа çавăрăнса пăхрĕç ти, унтан портфĕле илсе хăйсемпе кĕмеҫĕнҫĕç.

Хăрахăрах кĕтĕм мĕн курасси илтессине сиссех Пĕтĕм ĕссĕр халăх кунта.

— Çапла иргет пирĕн ĕç кунта! тесе каппайаççĕ финанс хуçисем.

Хăвăртрах тухса тартăм та, вулĕçтăвкома хашкаса ҫупса çитрĕм. Темĕн ҫулех халăх.

—Кама кĕтеттĕр, краштăнсем? тетĕп.

— Çĕр пирки çĕркомиççине сута килнĕҫҫĕ те, каллех телей пулмарĕ пулмалла: икviç уйăх ĕнтĕ çапла çўретпĕр—çĕркомиççи пуçлăхĕ Сахкарăв кувĕнçĕрĕнех ĕçсе çўрет сутне те самакенттăнах туса параť те ĕнтĕ... Ав, пăхăрха, çавсем мари çавăнта Парăнăвпа ыталашса çўреççĕ?.. терĕ пĕри.

— Çук, капла май килмест! Кунта халех çивĕҫ „Капкăн" килсе лартса, ку тискер кайăксене тытса пĕтермелле,—тесе, кăшкăрсах тухса ҫупрăм Шупашкарала.

(Шупашкара мĕнле çитсе, мĕн курнине тепĕр №-те çырăп сывă пулсан).

ҪĂВАШ КРОККОТИЛĔ.



### Сӑрланӑ куҫ.

„Иртнӗ ҫура Иурашра (Ђупай в.) шкул ҫине сӑрларӗҫ.Ҫур ҫултанах сӑрлани ҫумӑрпа йухса, ӗлӗкхи сӑрӗ паларма пуҫларӗ. Ҫапла вара укҫа сайа йани анђах пулђӗ", тесе ҫыраҫҫӗ пирӗн пата.

Шкул ҫине сӑрлиђђен малтан ху куҫна сӑрласан куҫ курми пулаҳ ҫав вара.

Сӑрлаканӑн куҫне уҫас пулаҳ.

### Ыран

Цайан парас йапалана ыран пама та йураҳ, анђах ыран тата пулаҳ ҫке-ха вӑл. Апла шутласан вӗсене тупаймӑн вара.

«Авкустӑн 28 мӗшӗнђе Шупашкар Страхкассине пӗр ҫын пособи илме пыраҳ. Укҫа ҫук, ыран кил теҫҫӗ ӑва. Вӑл унта куллен кайса тӑраҳ, кашни кунах ӑна ҫав ответа параҫҫӗ: «укҫа ҫук, ыран кил». Ҫенҭапӗрӗн 9 ш ђисли те ҫитрӗ, анђах «ыран» хаљ те пӗгмест-ха. Укҫи ҫукне те ҫуктӑр та, анђах мӗн тума ҫынна вырӑнсӑр ҫӳретмелле» тесе ыйтаҳ ҫыракан.

Мӗт тума пулаҳ-и?.. Ак тамаша! Ҫын ҫӳремесен ӗҫлени курӑнмасҳ ҫке-ха вӑл.

### Саттана.

„Кӗҫӗн Иалђакре (Патӗрйел у.) 8 ҫуллӑ шкулта Иекор Порисҫӑв вӗрентет. Ӗлӗк вӑл пуора пурӑннӑ, халӗ ҫӳҫӗсене касна та, уђђитле кӗнӗ. Хрес ђен ађисене вӗрентес вырӑнне есӗр саттана, тиккар, тесе мӑшкӑласа пӗтерет. Вӗренекенсем ҫавӑнтан хӑраса вӗренме пӑрахаҫҫӗ, ытти шкулсене тараҫҫӗ, тет пӗри.

Унтан хӑтӑлас тесен „исыги, саттана" текен лосункӑпа ӗҫлес пулаҳ. Вӑл пупсен лосунки те ӗнтӗ,— шаҫҫана шаҫҫапах ҫапса кӑлармалла, теҫҫӗ выӑссем.

## Пыйтӑ арххивӗ.

Ӗлӗкех ҫын вилсессӗн унӑ йапали сене тупӑка, йе унӑн шӑтӑкне тултарса йанӑ халӗ те ун пек тукалаҫҫӗ те. Анђах, пупсем вӗрентнине, йапаласене ђиркӗве леҫме пуҫларӗҫ. Вилнӗ ҫын хӑй йађђӗпе усранӑ икконсене леҫеҫҫӗ, тата ыттине те.

«Ђиркӳллӗ Алмавђри (Упи в., Ҫӗрпӳ у.) ђиркӳне пӗр ђӳређи ҫине вилнӗ ҫын икконисем тултарнӑ ҫӗрте пыйтӑсем алхасса кайнӑ. Ђӳређи талкишпех ђупаҫҫӗ, ҫынсене те йереҫҫӗ»,

тет „Темӗр Туйа" Тӗрӗс. Пыйтӑсем ҫеҫ мар, вилнӗ ҫынсен ђирӗсем те ђиркӳрен йала тавӑрӑнма тытӑнӗҫ.

Хӑш-хӑш ҫӗрте вилнӗ ҫын пыйтисене ӑрасва кӗлӗсемпе урама илсе тухса ђул ҫиве хурса ҫунтараҫҫӗ. Ал манђ йенђе икконсемпе пӗрле архива хураҫҫӗ пулмалла. Тирпейлӗ, тирпейлӗ

## Авалхи картсем.

Авалхи ҫынсем пӗрпӗр ҫынтан укҫа илмелли пулсан, манас мар тесе, патак ҫине карт туса хунӑ. Халӗ апла тӑвакансем ҫук тейӗр есӗр. Ҫук мар, пур. Хаљ ун пек йапаласемпе... пупсем хӑтланаҫҫӗ.

«Кӗђкей вулӑсӗвђи Аристовски пуп, килӗрен ҫӳревӗ ђухне, камӑн ӑна тӳлеме укҫи ҫитеймест, унӑн сӗгелӗ ҫине ҫӗҫӗпе картса, сирӗнтен ҫакӑн ђухлӗ укҫа илмелли йулђӗ тесе, паллӑ туса хӑвараҳ, тет „Куҫ" й.

Ҫынсен сӗтеллисене картса ҫӳриђђен ҫынна улталама йурамасҳ, тесе, хӑй сӑмсине картасђӗ.




## Тухмалли-кӗмелли вырӑн.

Шупашкар шывӗ кӗрхи ҫил майӗпе вӗтӗртетсе хумханса йухса выртат̆. Шупашкар шывӗн сулахай йенꚓе илемлӗ ꚓеꚓек пахꚓи Шупашкар илемне кўрсе ларат̆. анꚓах ҫак Шупашкар илемне кўрекен пахꚓана хирӗҫ Шупашкар сӑнне йаракан йапаласем ꚓас ꚓасах курӑнкаласа кайаҫҫӗ.

Милитси путки хыҫӗнꚓе шыв хӗринꚓе йаланах тула тухакан ҫынсем ларвине курма пулат̆, тата милитси путкинꚓе ларакансене тула тухма ҫа кӑнтах илсе тухаҫҫӗ. Ҫак пур ирсӗрлӗхсем Шупашкар шывне йухса анаҫҫӗ. Пасара килекен йалти ꚓӑвашсем кунтан аватарахран шыв ӗҫеҫҫӗ.

— Акӑ санитарипе кикийенӑ!!

Ҫав тухмалли кӗмелли вырӑна ҫак тавраракра туса лартсан йурамала марши? ве куна куракан куҫ ҫукши Шупашкарта?

СТУТЕНТСӐ

### Хирӗҫ калани.

Мӗвле куракан ҫук? Куракансем пур та.. Анꚓах ун ҫинꚓен „Канашра“ ҫырма хӑратпӑр, мӗншӗн тесен пӗлтӗр „Канаш“ хаҫатра Кайпулккӑ шывӗ ҫинꚓен пӗꚓӗк кӗпер пит йапӑкхи ҫинꚓен ҫырса пӗлтертӗмӗр те, кайран „тӑнлӑ-пуҫлӑ“ технӗк Александрӑв,вӑл кӗпер «местнӑй снаꚓени имет тӑват̆» тесе, кӗперне пӑсма хушрӗ. Унта халӗ те кӗпер ҫук. Урӑ ҫынсем шуҫса ўкеҫҫӗ, ўсӗрсем аллисемпе урисемпе шапа пек шуҫса анса, ҫырма тӗпне сысна пек саралса выртаҫҫӗ. Ҫав кӗпертен инҫех мар ҫӗнӗ пивнӑй уҫӑлнӑ пирки, вӑл кӗпер технӗксене хӑйсене те кирлӗ пулат̆ Ҫапах та „Канашпа“ „Капкӑнра“ ҫырса пӗлтернисем ҫине ҫурас тесе, ӗлӗк управ тутарнӑ кӗпере «местнӑй снаꚓени» туса хурса пӑсса карӗҫ. Ес калана Шупашкар шывӗ ҫинꚓен халӗ «Капкӑнра» ҫырма хӑратпӑр. Ꚓепоксаркка вӑл «местнӑй снаꚓени имет тӑват̆, тейӗҫ те, кӗпере ҫӗмӗрнӗ пек, Ꚓепоксарккӑна та ҫӗмӗрсе пӑрахӗҫ. Вара пасара килнӗ ҫынсен мӗн ӗҫес? Ирӗксӗрех ҫав Кайпулккӑ ҫинꚓи ҫук кӗпер урлӑ Йепрукков пивнӑйне кайса» ӑш кантарас пулат̆

ОПꚒЕСТВЕННӐЙ СНАꚒЕНИ ҪЫН.

## Вырӑсла пӗлменни пӗтерꚓӗ.

Иалне мӗнне пӗлмесгӗп, виҫӗ ꚓӑваш пӗр йалтан Ꚓулхулана кайма тухнӑ, тет. Виҫҫӗшӗ те вырӑсла пӗлмен, тет. Ҫул ҫинꚓе вӑрман пулнӑ. Вӑрмана пырса кӗриꚓен вырӑсла вӗренме шут тытнӑ. Вӑрмана кӗнӗ кӗмевех ꚓӑвашсен телейне виҫӗ вырӑс каласса тӑраҫҫӗ, тет. Вырӑссем каласса тӑнӑ ҫӗрте итлесе, виҫҫӗн виҫ сӑмах вӗренꚓӗҫ тет. Пӗрӗмӗшӗ: „мы“ тенӗ сӑмаха, иккӗмӗшӗ „дъ“ тенӗ сӑмаха; виҫҫӗмӗшӗ «давно пора» тенӗ сӑмаха. Хайхи ꚓӑвашсем вырӑсла вӗреннипе хӗпӗртесе анꚓах пыраҫҫӗ, тет.

Кӑнтӑрла ҫитерехпе ꚓӑвашсем канма ларꚓӗҫ, тет пӗр вар пуҫне. Кусем асӑрхаман та, ҫывӑхрах ҫын вилли пулнӑ мӗн. Канакансем тӑриꚓен урет нӗксем иртсе пыраҫҫӗ, тет. Уретнӗк ҫын виллине курат̆ те, ыйтат̆,—Вы ли убили етого чековека“ тет. Пирӗн вырӑсла пӗлекен ꚓӑвашсем тапратаҫҫӗ каласма: «мы» тепри: «дъ» тесе хураҫҫӗ. Уретнӗк:—„Арестоват̆ надо вас“ тет. Виҫҫӗмӗшӗ „давно пора“ тет. Вара уретнӗк ꚓӑвашсене тытат̆ те кайса хупат̆ тӗрмене. Ҫапла ӗнтӗ пӗлмен мӗн тумаст̆.

# ЛИТТЕРАТТУРĂ ПАЙĔ.

## Ђаплă Ăсана.

Ăса йулташ—ђаплă тус,
Пултаратнах ухмах пуç!
Аттай йулташ сăввине,
„Канаш" çиве çапнине,
Çутă кувта йышăнса,
Унăн хыçне ал пусса
Иатăн-ĕçве „Капкăна"—
„Капкăв" хуçи аллине...
...„Капкăн" хуçи ухмах мар,
„Капкăнĕ" те пысăк мар.
Сана вăлă тытрĕ те,
Йут сăввуна илђĕ те
Хуђĕ вара шăл айне—
„Капкăн" пĕкĕђ хушшине.,.
Кап! кап! ка-ап! тутарса,
Сана вăлă кăшкăртса
„Капкăн" вăйне кăтартрĕ,
Сăвă çырма вĕрентрĕ...
...Ăса йулташ—ђаплă тус,
Пултаратнах ухмах пуç!
Çын сăввине йышăнса
Карăн вĕт ес шăршланса...
Куншăн сана ђăн йатна,
Хăвăн ђаплă атрĕсна
„Капкăн" çине çапмалла,
Шăла çыртса кулмалла.

ХУТАР.

## „Капкăн" хуçине çамрăклантаракан йапала.

Т. Çеменăв çырат:
„Çĕнĕ пўрт лартас килсессĕн
Кахалланса ĕçлес мар,
«Капкăн» илес тесессĕн
10 пус укçа шеллес мар»
тет. Пит аван, шăллăм! Пурте сан пек пулсассăн, «Капкăн» хуçи ватăскер, çамрăклanмалли емел ĕçмесĕрех, çамрăкланса кайĕђĕç. Анђах мана парас укçине пирус туртса пĕтереççĕ çке. Пирус туртнăшăн «Капкăна» лектерес пулат ха.

## КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

Кашкăра. Пĕђĕк ађасем, ашшĕсем çук ђухне, ђўређе кантăкĕсене çĕмĕрни çинђен çырви пире кирлĕ пулмарĕ. Виç çултан кайараххи ађасене «Капкăн» çаклатасшăн мар.

Куракана. Пођтă йешђĕкне кĕнĕ çырусемшĕн конорар памастпăр.

Кĕлтука. Арăмĕ упăшкине ђуп туни çинђен «Капкăна» çырмастпăр. Ђуптума пултарат вăл. Ахађ ларађђен кĕрĕк аркине те пулин йавала, тесе çыртăни мĕн ун çинђен.

Ответ. редактор А. Золотов.


„Капкăна" йуратакансем!

..КАПКĂН" шурнала САРМА тăрăшăр!

Çулталамкăх 200 потписђĕк тупакансене

ПУРНЕ ТЕ ПĔР ПЛУК

ПАРАТПĂР.

Потпискă тупакансене парас тесе 100 ПЛУК хатĕрлерĕмĕр.


Чувашлит № 905. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга".